Çамрăксен уявĕнчен

# Яшсемпе хĕрсем, малти ретре пулар!

Çамрăксем обществăн чи активлă пайĕ, вĕсем çĕршывра пулса иртекен тĕрлĕ улшăнусене хăвăрт сиссе, хăйне евĕр ăнланса хак пама тăрăшаççĕ. Пирĕн тăрăхри халăхăн виççĕмĕш пайĕ – çамрăксем. Çавăнпа та çамрăк ăрăва тĕрĕс çул кăтартса-йĕркелесе пыни патшалăхăн тĕп тĕллевĕ шутланать. Çакна шута илсе 1996 çулхи июнĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа “Чăваш Республикин çамрăксемпе ĕçлемелли Патшалăх Политики” Саккунĕ ĕçе кĕчĕ.



Пирĕн районта та çамрăксен кунне уявласси ырă йăлара. Тĕрлĕ отрасльсенче ĕçлекен пултаруллă яшсемпе хĕрсем июнĕн 23-мĕшĕнче Лантăш вăрманĕн уçланкинче çак куна халаллана фестивале пухăнчĕç.

Уява килнисен кăмăлне сиснĕрен-ши, хĕвел те ăшшине хĕрхенмерĕ. Пĕтĕмпе ăмăртăва тăхăр ял тăрăхĕнчен килнĕ çамрăксен командисем хутшăнчĕç. Вĕсене чи малтанах район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ Л.И. Мочалов, Г.Г. Любимова тĕп специалист саламларĕç.

Ăмăрту виçĕ пайран тăчĕ: спорт, творчество пултарулăхĕ тата апат-çимĕç хатĕрлесси. Спорт тупăшăвĕнче Çатракасси ял тăрăхĕнчи çамрăксен команди 1-мĕш вырăна тата куçса çӳрекен кубока тивĕçрĕ, 2-мĕш вырăна – Муркашсем, 3-мĕш вырăна Москакассисем çĕнсе илчĕç. Творчество пайĕнче Муркаш ял тăрăхĕнчи çамрăксем куçса çӳрекен “Ника” кубока тивĕç пулчĕç, 2-мĕш вырăнта – Çатракасси, 3-мĕш вырăнта Москакасси командисем пулчĕç. Тутлă апат-çимĕçе вара Муркашсем техĕмлĕрех хатĕрлерĕç, 2-мĕш вырăн – Çатракассисенче, 3-мĕш вырăн – Юнкă çамрăкĕсенче. Фестивальте, пĕтĕмĕшле илсен, Çатракассисем маттуртараххи палăрчĕ. Вĕсем икĕ кубок илсе çĕнтерӳçĕ пулчĕç. Муркашсем 2-мĕш вырăна, Москакассисем 3-мĕш вырăна тивĕçрĕç. Тĕрĕс хак пама жюри членĕсем, вĕрентӳ пайĕн специалисчĕсем ĕçлерĕç, милици ĕçченĕсем йĕркене сыхлакансем пулчĕç.

Пурнăç уттипе тан утакансем ĕçре те, канура та пит маттур. Çирĕм пĕр хастар çамрăк район администрацийĕн тата ял хуçалăх управленийĕн Хисеп грамотисемпе хаклă парнесене тивĕçрĕç. Çавăн пекех вĕренӳре пултарулăх кăтартса çичĕ ылтăн, вун икĕ кĕмĕл медаль илнĕ яш-кĕрĕме шкул тенкелĕпе сыв пуллашнă май ăнăçусем, çутă малашлăх сунса район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов ăшшăн саламларĕ.

– Çакăн пек маттур яшкĕрĕм пулни пире савăнтарать. Вĕсен йышĕ çулран-çул ӳссе пытăр. Эпир вара хамăр енчен мĕн палăртнă таран пулăшма, ăнланса ĕçлеме тăрăшăпăр. Çамрăксем, малашлăх сирĕнте,- терĕ Юрий Александрович.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Çатракассисем мала тухрĕç.**

## Кăçал вăтам шкула ылтăн тата кĕмĕл медальсемпе вĕренсе пĕтернисем

| | |
|---|---|
| **Ылтăн медале тивĕçнĕ** | |
| Артемьева Зинаида | Муркаш лицейĕ |
| Васильева Татьяна | Муркаш лицейĕ |
| Любимова Людмила | Муркаш лицейĕ |
| Костина Дина | Муркаш лицейĕ |
| Иванова Мария | Муркаш лицейĕ |
| Трофимова Татьяна | Муркаш лицейĕ |
| Ефимова Ольга | Муркашри вăтам шкул |
| **Кĕмĕл медале тивĕçнĕ** | |
| Анисова Альбина | Муркаш лицейĕ |
| Антонов Николай | Йӳçкассинчи вăтам шкул |
| Васильева Оксана | Муркаш лицейĕ |
| Ершова Екатерина | Орининти вăтам шкул |
| Ефимова Надежда | Муркаш лицейĕ |
| Кириллова Снежана | Москакассинчи вăтам шкул |
| Кузнецова Ирина | Муркаш лицейĕ |
| Курбанова Ирина | Муркаш лицейĕ |
| Петрова Ольга | Муркаш лицейĕ |
| Юмжакова Екатерина | Муркашри вăтам шкул |
| Михайлова Диана | Мăн Сĕнтĕрти вăтам шкул |
| Угарова Евгения | Калайкассинчи вăтам шкул |

ГИБДД пĕлтерет

## Техника юсавлă пултăр

Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне ГИБДД районти уйрăмĕнче 6059 автомототранспорт учетра тăрать, çав шутра 3407-шĕ уйрăм çынсен шутланать. Юсавсăр техникăпа усă курнăран кăçал 11 авари пулнă.

Июнĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа июнĕн 30-мĕшĕччен учета тăратман автомототранспорта тупса палăртассипе ĕçлерĕмĕр.

Техникăна яланах юсавлă тытăр. Юсавсăр транспортпа çула тухни инкек патне илсе пынине ан манăр.

**С. ИВАНОВ, çул-йĕр инспекторĕ.**

# МТС Муркаш районĕнче – çĕнĕ пахалăх палли!

Сотовăй телефон тахçанах ĕнтĕ пурнăçра чи кирлĕ хатĕрсенчен пĕри пулса тăчĕ, ку хула çыннисемшĕн кăна та мар. Республикăри районсенче сотовăй телефон – яланах çыхăнмалли меслет. МТС Чăваш Енре пĕр çулталăк ытларах кăна ĕçлет пулин те, компани шанчăклă оператор тата çывăх тус пулнине кăтартса пачĕ. Бренд çĕнелнипе улшăнусем операторсем паракан пулăшусем пур кашни региона та пырса тиврĕç. Тӳлев карттисен çĕнĕ тĕслĕхĕсене сутма пуçларĕç ĕнтĕ, вĕсем кивĕ дизайнлă карттăсемпе пĕрлех – вĕсене пĕтĕмпех улăштариччен – вăйра тăрĕç. Компанин çĕнетнĕ www.chuvashia.mts.ru сайчĕ хăйĕн ĕçне пуçларĕ. МТСăн суту-илӳ офисĕсем – клиентсемшĕн меллĕ салон-лавккасем.

Паян МТС сечĕсем пĕтĕм республикипе сарăлчĕç, çав шутран Федераци пĕлтерĕшлĕ çулсем çинче те. Мĕн тунипе çырлахмасăр, кăçалхи çĕртме уйăхĕнче техника ĕçĕсем ирттернĕ хыççăн Муркаш районĕнче çыхăну пахалăхне лайăхлатнă тата çĕнĕ база станцине хута янă. Унта вырнаçтарнă оборудовани районти пур ялсемпе те питĕ шанчăклă çыхăнма май парать. Эсир ăçта пулнине – хулара, районта е пачах урăх çĕршывра – пăхмасăрах МТС хăйĕн кашни клиенчĕшĕн пĕрмай тăрăшать. Халĕ Муркаш районĕнчи пур ялсенчен те МТС абоненчĕсем çăмăллăнах çыхăнма пултараççĕ. Муркаш районĕнче пурăнакансем паян ялан сарăлса пыракан çăмăллăхсене, лайăх пахалăха, килĕшнĕ хаксене тата меллĕ тариф планне суйласа илме пултараççĕ.

### “Пĕрремĕш” – йăлтах ансат!

МТС компани хăйĕн абоненчĕсене ăнланнине тата вĕсемшĕн тăрăшнине çирĕплетекен тепĕр япала вăл – **“Пĕрремĕш”** çĕнĕ тариф. **“Пĕрремĕшне”** чăннипех хăйне евĕрлĕ темелле. **“Пĕрремĕш”** вăл – унта кĕрекен пур шăнкăрав та тӳлевсĕр (çав шутран хулари телефонсенчен шăнкăравлани те), регионти пур телефонсенчен килекен шăнкăравсен пĕр минутлăх хакĕ те меллĕ пулни. Çыхăнтарнăшăн нимĕнле тӳлеве те илмеççĕ! Чăваш Енре тухакан шăнкăрав хакĕ – пурĕ те 6 цент кăна. Кама ансат та лайăх çыхăну кирлĕ, МТСăн çак сĕнĕвĕ пурне те интереслентерме пултарать. Кунпа пĕрлех ытти майпа та усă курма пулать, сăмахран, “Лимитсăр канмалли кунсем” пулăшу ыйтма.

Вăл шăмат кун тата вырсарни кун сехечĕ-сехечĕпе калаçма май парать. Сирĕн сотовăй телефонăн аккумуляторĕ ĕçлеме пултартăр кăна. Кунсăр пуçне **“Пĕрремĕшĕн”** абоненчĕ “юратнă” виçĕ номерпе шăнкăравлама пултарать, çак шăнкăравсем икĕ хут йӳнĕрех. **“Пĕрремĕшĕнче”** “юратнă” номерпе пуçласа çыхăнтарма укçа тӳлемелле мар.

**“Пĕрремĕш”** тариф çине “Перспектива” салон-магазинра çырăнма пулать. Адресĕ: Муркаш ялĕ, Октябре 50 çул урам, 5 çурт. **“Пĕрремĕшне”** ытти тариф планĕсенчен куçас тесен 007 текстпа 1771 номерпе пĕлтерӳ парăр е МТСăн çыхăну центрне 0890 номерпе шăнкăравлăр. Пулăшу ыйтса эсир “Мобиль пулăшуçине” (00227) шăнкăравлама е www.chuvashia.mts.ru сайтне кĕме тата “Интернет-пулăшуçă” пулăшнипе хăвăр тĕллĕн ĕçлеме пултаратăр.

Компани абоненчĕсен çăмăллăхсемпе майсем çав тери нумай, çавăнпа та вăхăта сая ямалла мар: енчен те эсир сотовăй çыхăну пулăшăвĕпе усă курма шутларăр пулсан, МТСпа çыхăнăр.

РФ Çыхăнупа информатизаци патшалăх комитечĕн 30258-мĕш номерлĕ лицензийĕ.




Официально

**Центральная Избирательная Комиссия Чувашской Республики**
**Постановление**

06.06.2006 г. “78-373-III

г.Чебоксары

**О вложении полномочий окружных избирательных комиссий по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва на территориальные избирательные комиссии**

В соответствии с пунктом 1 статьи 25 Федерального закона “Об основных гарантиях избирательных прав и права на участие в референдуме граждан Российской Федерации”, с частью 1 статьи 20 Закона Чувашской Республики “О выборах депутатов Государственного Совета Чувашской Республики” Центральная избирательная комиссия Чувашской Республики постановляет:

... 8. Возложить полномочия окружной избирательной комиссии по Моргаушскому одномандатному избирательному округу №8 по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва на Моргаушскую избирательную комиссию...

17. Увеличить состав территориальных избирательных комиссий, на которые возложены полномочия окружных избирательных комиссий по выборам депутатов Государственного Совета Чувашской Республики четвертого созыва, до одиннадцати членов с правом решающего голоса.

18. Предложить политическим партиям, представительным органам соответствующих муниципальных образований, общественным объединениям, собрания избирателей по месту жительства, работы, службы, учебы в срок до 10 июля 2006 года представить в Центральную комиссию Чувашской Республики предложения по кандидатурам в составы вышеперечисленных территориальных избирательных комиссий.

19. Направить настоящее постановление в средства массовой информации для опубликования.

**Председатель Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики**
**Л.Н.ЛИННИК.**

**Секретарь Центральной избирательной комиссии Чувашской Республики**
**А.И.ЦВЕТКОВ.**